Социаллă хӳтлĕх

Тимлĕхрен хакли мĕн пултăр?

Районти социаллă хӳтлĕх пайне кунне миçе çын килмест-ши? Кашнин хăйĕн ыйтăвĕ. Кунта ĕçлекенсем вара кашни çынпа тимлĕ пулма, вĕсен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерме тăрăшаççĕ. Ку çеç те мар. Социаллă ĕçченсем тăтăшах ватă çынсем патне тухса çӳреççĕ, ял тăрăхĕсенче халăха хăйсен ыйтăвĕсемпе те йышăнаççĕ. Хальхи вăхăтра вĕсем аякра вырнаçнă ялсенче пурăнакан ветерансем патне çитеççĕ. Çакăн çинчен Чăваш Республикин Социаллă аталану тата сывлăх сыхлавĕн министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи Н.П. ПЕТРОВА çапла каласа парать:

– Чăваш Республикинчи вăрçă, ĕç, Хĕç-пăшаллă Вăйсен тата право йĕркине сыхлакансен ветеранĕсен (пенсионерсен) канашĕ ветерансен Пĕтĕм Раççейри канашĕн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 2010 çулхи майăн 1-мĕшĕччен «Аякри вырăнсенчи ветерансене – халăх тимлĕхĕ тата пулăшăвĕ» акци иртерет. Ăна 1941-1945 çулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçăра тунă Çĕнтерӳ 65 çул тултарнине халалланă. Çак акци вăхăтĕнче аякра вырнаçнă, малашлăхсăр, урăхла каласан, транспорт пĕр вĕçĕм çӳреймен, суту-илӳ, медицина, социаллă, йăлари, культура ыйтăвĕсем тĕлĕшĕнчен кунсерен пулăшмалли условисем çук ялсенчи ватă çынсене ытларах тимлĕх уйăрмалла. Пирĕн районта 177 ялтан çакăн пек ялсем 29. Вĕсенче 450 ватă çын пурăнать.

Каласа хăвармалла, район пуçлăхĕ иртнĕ çулхи августăн 11-мĕшĕнчех «1941-1945 çулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçăра тунă Аслă Çĕнтерӳ 65 çул тултарнине хатĕрленсе ирттересси çинчен» йышăну кăларнăччĕ. Унпа килĕшӳллĕн районта çав ветерансем патне тухса çӳремелли графика çирĕплетнĕ. Ку таранччен районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ĕçченĕсем РФ ПФ специалисчĕсемпе, культура ĕçченĕсемпе пĕрле Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи Юрпашпа Уйкас Апаш, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Ямолккă, Ильинка ял тăрăхĕнчи Хунтăкасси ялĕсенчи ватă çынсемпе тĕл пулчĕç. Вĕсене кăсăклантаракан ыйтусем çине хуравланă хыççăн концерт лартатпăр. Ватă çынсем хăйсем патне килсе çӳренĕшĕн питĕ кăмăллă. Сентябрĕн 2-мĕшĕнче çакăн пек тĕл пулусем Катькас ял тăрăхĕнчи Анаткас ялĕнче 10 сехетре, Охтикассинче 11 сехет çурăра пуçланаççĕ.

Сăмах май çакна каласа хăвармалла. Районти социаллă хӳтлĕх пайĕпе социаллă пулăшу паракан центр çулсеренех РФ ПФ ĕçченĕсемпе пĕрле çуллахи вăхăтра халăха вырăна тухса йышăнаççĕ. Кăçал çакнашкал тĕл пулусем июль уйăхĕнче иртрĕç. Тĕрлĕ ыйтусем çине хуравланă хыççăн чун-чĕрене пырса тивекен юрăсем шăрантарнă чух вара çынсен куçĕсем те шывланаççĕ. Нина Пантелеевна хăй те юрлать çак пултарулăх ушкăнĕнче. Тĕпрен илсен, унта районти ветерансен хорĕн (илемлĕх ертӳçи – Ю.Жуков композитор) пĕр пайĕ тата районти Культура çурчĕ çумĕнчи Юрий Нестеровичах ертсе пыракан «Илем» ансамбле çӳрекенсем. Ку вăл халь. Ку ĕçе пуçласа янă вăхăта вара Нина Пантелеевна çапла аса илет:

– Малтанхи çулсенче районти социаллă хӳтлĕх пайĕнче тата социаллă пулăшу паракан центрта ĕçлекенсем РФ ПФ специалисчĕсемпе пĕрле халăх ыйтăвĕсем çине хуравлаттăмăр. Концертне лартакансем те хамăрахчĕ. Халĕ çак информацип художество ушкăнне районти культура ĕçченĕсем те хаваспах хутшăнаççĕ.

– Кунта районти ветерансен хорĕ çинчен те калаçма пуçларăмăр та, ыйтмасăр чăтаймастăпха. Районта иртекен тĕрлĕ мероприятисене тухса çӳренĕ май ветерансен хорĕн концертне пĕр кун 2 хут итлеме тиврĕ. Виççĕ курсан та йăлăхтармасть пулĕ. Куçсемпе кашни çынна пăхса кайрăм та тĕлĕнтĕм: ялти ятлă-сумлă çынсем вĕт-ха унта пурте. Мĕнле пухма пултартăр вĕсене пĕр чăмăра? Тата Эсир хăвăр уйрăммăн юрă юрлама пуçласан та, вара залра ларакансем: «Çав Нина Пантелеевна мĕнле вăхăтне тупать-ши» – тесе те илчĕç. Чăнах сумлă коллектив. Юрласса та профессиллĕ артистсенчен кая мар юрлаççĕ.

– Çул çинче курсан та ветерансен хорне йĕркелесе ямаллаччĕ, текенсем тупăнсах тăратчĕç. Вара Юрий Жуков композиторпа, ветерансен канашĕпе калаçрăмăр та ветерансен хорне йĕркелемеллех тесе шутларăмăр. Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов та ырларĕ пирĕн шухăша. Хĕлле пуçтарăнма пуçларăмăр çапла. Кивĕ Çĕн çул уявне çак коллективпа пĕрле ирттертĕмĕр. Пенсионерсен клубне те йĕркелерĕмĕр. Ăна нумай çул Муркаш райпо Канашĕн ертӳçин çумĕнче ĕçленĕ, халĕ тивĕçлĕ канури Е.С. Куликова ертсе пырать. Халĕ пирĕн ветерансем çуралнă кунсене те, уявсене те клубра пĕрле паллă тăваççĕ. Ветерансен хорне çӳрекенсем эрнере икĕ кун – ытлари кунпа эрне кун – 10-ран тытăнса 11 сехет çурăччен репетицире пулатпăр. Халĕ унта çӳрекенсем 30 çынран та иртрĕç.

– Кĕске вăхăт хушшинчех ветерансен хорĕ ырă ят çĕнсе илчĕ.

– Республикăри ветерансен хорĕсен конкурсне хутшăнса, чăнах та, 3 степень диплом çĕнсе илме пултартăмăр. Республика кунĕ умĕн Шупашкарти Лакрей вăрманĕнче иртнĕ концертра та сцена çине кăларчĕç пире. Районти «Акатуй» уявĕнче те хамăр пултарулăхпа паллаштартăмăр. «Ударник» хуçалăх çурхи ĕçсене вĕçленĕ хыççăн йĕркеленĕ уява ветерансен хорне чĕнчĕ. Унта та пире хапăл тусах йышăнчĕç. Халĕ акă эсир палăртрăр ĕнтĕ, ветерансен хорĕн пĕр ушкăнĕ «Илем» ансамбльпе пĕрле ялсенчи ватă çынсен умĕнче юрлать.

Çуллахи вăхăтра та ветерансен хорĕн членĕсем хăçан пуçтарăнма пуçлатпăр тесе ыйтсах тăраççĕ. Сентябрĕн 25-мĕшĕнчен репетицисем пуçланаççĕ. Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунĕнче вара концерт программипе çĕнĕрен сцена çине тухма ĕмĕтленетпĕр.

– Нина Пантелеевна, вырăна тухса çӳренипе пĕрлех ытти тивĕçсем те сахал мар вĕт-ха Эсир ертсе пыракан пайăн.

– Патшалăх пăхнă пособисемпе тата çăмăллăхсемпе вăхăтра тивĕçтерме тăрăшатпăр. Ача пособийĕсене илсе тăракансем районта 2 пин çурă çемьене яхăн. Вĕсене уйăхсерен тӳлемелли сумма 1600 пин тенкĕпе танлашать.

Регион шайĕнчи çăмăллăхсемпе те вăхăтра тивĕçтерсе тăратпăр. Реабилитациленисене çак тĕллевпе тӳлеме уйăхсерен 95 пин, ĕç ветеранĕсене тӳлеме каякан тата вĕсене телефоншăн тӳлемелли сумма пĕрле 2400 пин тенкĕ, тыл ĕçченĕсене пама 580 пин тенкĕ тухса каять.

Унсăр пуçне федераллă шайри çăмăллăхсем илсе тăракансене кăçалтан пуçласа коммуналлă пулăшупа усă курнине саплаштарма кашни уйăхрах 1 миллион тенкĕне яхăн укçа тăкакланать.

Çавăн пекех коммуналлă тăкаксене саплаштарма палăртнă субсидисемпе çăмăллăхсене парассипе те тимлетпĕр. Çак тĕллевсемпе уйăхсерен 1300 пин тенкĕне яхăн тӳлетпĕр.

Ачана опекăна тата çемьене пăхма илнисемпе те ĕçлетпĕр. Вĕсене паракан пулăшу уйăхсерен 450 пин тенкĕпе танлашать. Каласа хăвармалла, паянхи куна ют ачана пăхма илнĕ çемьесем 11-е çитрĕç. Вĕсенче 15 хĕр ачапа арçын ача çемье ăшшине тупрĕ.

Социаллă ĕçченсем ватă çынсем патне те кулленех тухса çӳреççĕ. Вĕсен пурнăç условийĕсемпе кăсăкланаççĕ. Тимлĕхрен хакли çук та пулĕ ватă çынсемшĕн. Ватăсемшĕн кăна мар, кашнинех кирлĕ вăл.

– Тавах, Нина Пантелеевна, калаçушăн.

Л.ПАВЛОВА
каласа.

Пенси ыйтăвĕсемпе

Пенси виçисем ӳсеççĕ

Хальхи вăхăтра РФ Пенси фончĕн районти управленийĕнче ĕç пенсийĕсене валоризацилессин, 2010 çулхи январьтен тытăнса пенсисен виçисене ӳстерессин ыйтăвĕсемпе ăнлантару ĕçĕсем анлă сарăлнă.

Кăçалхи июль уйăхĕнче ял тăрăхĕсенче, инçетри ялсенче çитес вăхăтри валоризаци ыйтăвĕсемпе 21 тĕл пулу ирттернĕ. Вĕсене 631 çын хутшăннă. Кунсăр пуçне валоризаци ыйтăвĕсемпе, унăн принципĕсене ăнлантарса парассипе 35 çын Управлени пулăшăвĕпе усă курнă. Раççей Федерацийĕн 2009 çулхи июль уйăхĕн 24-мĕшĕнче йышăннă 213-ФЗ номерлĕ Федераллă саккунĕ вăя кĕнĕ тата çак саккунра право никĕсне уçăмлатнă май август уйăхĕнче çынсем тĕл пулусене активлă хутшăннă. Çынсем хăйсен ĕç стажĕпе интересленеççĕ, заявлени çырмалли пирки ыйтса пĕлеççĕ, 2002 çул хыççăн пенсие тухнисене валоризаци витĕм кӳнине пĕлесшĕн тăрăшаççĕ. Вĕсене пурне те хăйсене интереслентерекен ыйтусем çине тĕплĕн ăнлантарса панă. Ыйтусене çавăн пекех Пенси фончĕн управленийĕн «тӳрĕ çыхăну» линийĕпе 62-8-91 телефонпа йышăнатпăр. Кунпа пĕрлех Управленире хушма стаж пирки документсем йышăнассине йĕркеленĕ.

Пенсисен валоризацийĕ – 2002 çулччен пухнă ĕç стажĕ пур граждансен пенси ирĕкне укçан хаклани. Вăл пенсионерсене кăна мар, 2002 çулччен ĕçленĕ, тивĕçлĕ канăва тухмалли ӳсĕм çитмен граждансене те пырса тивет. Валоризаци тунă чухне пенсин 2002 çулччен йĕркеленнĕ расчет капиталĕ 10 процент ӳсет тата 1991 çулччен пухнă стажăн кашни тулли çулталăкĕшĕн пĕршер процент хушса параççĕ. 2002 çулхи январĕн 1-мĕшĕччěнхи пенси ирĕкне хакланă чухне стажа кĕртнĕ тапхăрсенех шута илеççĕ. Стаж виçине вара чикĕлемеççĕ.

Пенси капиталĕ мĕн чухлĕ ӳсесси ĕç стажĕнчен килет. Çавăнпа та кашни гражданинăн пенси хушăнăвĕ тĕрлĕрен пулать. Пенсионер 2002 çулхи январĕн 1-мĕшĕ хыççăн ĕçлемен пулсан, валоризаци ирттернипе пенси мĕнле ӳснине шутлама ансат.

Тĕслĕхрен, 1930 çулта çуралнă хĕрарăм 1991 çулччен 44 çул та 2 уйăх та 3 кун ĕç стажĕ пухнă. Вăл 2002 çул хыççăн ĕçлемен. Валоризаци валли тулли 44 çулталăкри стажа тĕпе хурса шута илеççĕ. Апла пулсан пенсин страховани пайĕ унăн 10 процент пысăкланать тата 1991 çулчченхи кашни çулталăкшăн 1-шер процент ӳстернипе 44 процент хăпарать. Пĕтĕмĕшле хушăм 54 процентпа танлашать.

Халĕ çакна укçа çине куçарса пăхар. Пенсин страховани пайĕн 2009 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕ тĕлнехи виçине валоризаци проценчĕ çине хутлатпăр. 1920 тенкĕне 1,54 çине хутласан 2956 тенкĕ те 80 пус пулать. Валоризацие пула пенсин страховани пайĕ 1036 тенкĕ те 80 пус ӳсет (2956,80 тенкĕ – 1920 тенкĕ).

Пенсионер 2002 çулта тата ун хыççăн ĕçленĕ пулсан пенси виçине палăртасси кăткăсрах. Кун пек чух 2002 çулхи январĕн 1-мĕшĕччěнхи пенси капиталне никĕсе хываççĕ. Пенси страхованийĕн пĕтĕм пайне мар, мĕншĕн тесен унта страховани взносĕсене малтан шута илнĕ. Вĕсене вара валоризаци тумаççĕ.

Валоризаци валли гражданинăн заявлени çырмалла мар. Пенси фончĕ пенси виçине пенси ĕçĕнчи мĕн пур документсем тăрăх автоматизациленĕ йĕркепе шутласа парать.

Енчен те пенсионер 1991 çулччен пухнă хушма ĕç стажне (халиччен шута илменнине) пĕтĕмĕшле ĕç стажне кĕртес тет пулсан, пенси службине хăйĕн пыма тивет. Çакă вăл 45 çул ытларах ĕçленĕ арçынсемпе 40 çул ытларах ĕçленĕ хĕрарăмсене пырса тивет. Мĕншĕн тесен ун чухне асăннă стаж кăна пенси шутласа памалли чикĕ пулнă. Çавăнпа та çакăнтан иртнĕ çулсене чылайăшĕ çирĕплетме тăрăшман та.

Районĕпе, пĕтĕмĕшле илсен, валоризаци 8565 пенсионера пырса тивет.

Н. СЕМЕНОВА,
РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пенсисем шутласа парас тата тӳлес енĕпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ.

Астăвăм

«Сăмаварпа» суха туни те пулнă

Нимĕç фашисчĕсем Совет Союзĕ çине тапăнса кĕнĕ çул Москакассинчи шкултан вĕренсе тухрăмăр. Çапла вара пирĕн малалла вĕренес ĕмĕтсем хăмпă пекех çурăлчĕç. Пире, Çитăр Петĕрĕпе иксĕмĕре, ялти бригадир Алексей Антипов трактор бригадине плугаре вырнаçтарчĕ. Мана Мăрсакри Ониса трактористка, Петĕре Москакассинчи Праски трактористка çумне. Паллах, питĕ савăнтăмăр. Бригадир пулса ун чухне Астанкин хушаматлă çын ĕçлетчĕ.

Пĕррехинче «Красный богатырь» колхоз хирĕнче сухалатпăр. Уйкас Хачăкра пурăнакан ватă Максим Солянов, армантан килекенскер, лашине чарсах пирĕн пата пычĕ. Эпир тракторăн радиаторне шыв яраттăмăр.

– Эсир сăмаварпа сухалатăр-иç,– терĕ çакскер пире. Анан икĕ пуçĕнче те ун чухне шыв каткисем ларатчĕç. Тракторсен шыв циркуляцийĕ пулман, шывне тăтăшах хушса тăмаллаччĕ.

Тутаркасси ялĕнчен тепĕр хĕр-трактористка пурччĕ. Нимĕр-пăтă таврашĕ çиместчĕ вăл. Клавдия Васильевна повар ăна валли çăмарта пĕçерсе тухатчĕ. Манăн чĕлхе пур-çке-ха. Пĕррехинче эпĕ çак хĕре: «Санăн чĕлхӳ çинчи пĕр хут тирĕ вистенсе ӳксен?»– тесе персе ятăм. Вăл вара çăмарти мĕнĕпех трактор хыçне чăмрĕ.

Трактористкăсем хăш-пĕр чухне тракторсемпе сухалама пире те шанатчĕç. Пĕрле вĕреннĕ ачасем пăхса тăнине кура эпир вара ун чухне хамăра космоса кайнăнах туяттăмăр.

Апла-капла çу каçкаланă хыççăн хĕл те çитрĕ. Пĕррехинче Сăр юхан шывĕ хĕрринче нимĕç танкĕсене чармалли траншейăсем чавнă чухне Спиридон Козыркин мучипе (Придон мучи теттĕмĕр ăна) иксĕмĕр те чирлесе кайрăмăр. Сивĕ вăл вăхăтра 40 градус ытла та тăратчĕ. Çакна лайăх ас тăватăп: çăвартан сурнă сурчăк та çĕре çитиччен шăнса ларатчĕ. Çапла вара киле килмелле пулчĕ. Эпĕ сывалкаларăм-ха, Придон мучи вара çĕре кĕчĕ. Эпĕ уннăн атте вилнĕ пекех хуйхăртăм.

Унăн ывăлĕпе Костьăпа пĕр класра вĕренеттĕмĕр. Шкулпа юнашарах кантăр çăвĕ тăвакан заводра унăн ашшĕ мастер пулса ĕçлетчĕ. Кăнтăрлахи тăхтав вăхăтĕнче Костьăпа иксĕмĕр завода каяттăмăр та пире вăл пĕрер ывăç çăвне кăларман турантă паратчĕ. Пирĕншĕн вара ку вăл талăк пурăнмалли калори пулнă.

Вăл вăхăтра ватти-вĕттипех вăрçă рельсĕ çине куçнă. Манăн аттепе Никифорпа Кирилл Кондратьева, платник ĕçне пĕлекенскерсене, 53 çула çитнĕ пулсан та, çар комиссариачĕ урлă Шатракассинчи карçынкка артельне çар çунисем тума мобилизацилерĕç. Кунне вĕсене пĕрер килограмм çăкăр паратчĕç.

Москакасси шкулĕнче уроксем хыççăн ĕçлеме пултаракан тата хăмаран тунă винтовкăсемпе «хĕç-пăшалланнă» хĕрарăмсене мобилизаци йĕркипех вăрçă хирĕнчен сержант званийĕпе таврăннă Александр Степанович Желтов пуçламăш çар ĕçне вĕрентетчĕ. Халăх хушшинче вĕсене «бабий батальон» тетчĕç.

16 çула çитсен Шупашкарти хальхи суту-илӳ çуртне хирĕç вырнаçнă сарă тĕслĕ çуртра (малтан институт пулнă) Харьковран куçарса килнĕ электромеханика заводĕнче (ХЭМЗ) мобилизаци йĕркипе токарь-револьверщик пулса ĕçлеме тӳр килчĕ. Пӳ çитмен пирки ура айне пушă ещĕксем хурса тăраттăмăр. Станоксем умĕнче пĕтĕмпех ача-пăча. «Пĕтĕмпех – фронт валли, пĕтĕмпех – çĕнтерӳ валли» девизпа самолетсемпе танксем валли запас пайсем хатĕрленĕ. Çĕрне-кунне пăхмасăр ĕçленĕ, ытларах чухне канмалли кунсем те пулман.

Çĕрлехи вăхăтра халăхран вăрттăн хулари çар комиссариачĕ е общежити тавра окоп чаваттăмăрччĕ. Окоп чавнине, Шупашкарта бомбăсем çурăлнине никама та каламалла мар тесе пирĕнтен подписка илнĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçа Москакасси ялĕнчен 77 хуçалăхран 84 çын тухса кайнă. 48 çын вăрçă хирĕнче пуçне хунă. Вилнисем шутĕнче 34 каччă пулнă. Хăшпĕр килтен вăрçа икшер-виçшер çын та тухса кайнă.

Вăрçă кунĕсенчи ырă мар хыпар Кожелеевсен çемйинчен пуçланчĕ темелле пуль. Вăрçă пуçланнă хыççăн пĕрремĕш куннех пуç хунă салтак Леонтий Николаевич Кожелеев пулни пирки пĕлтернине Надежда Полякова почтальонка уйра тырă вырнă çĕре пырса пачĕ. Пире валли те кун пек хутсем килеççĕ ĕнтĕ тесе хĕрарăмсем макăрма пуçларĕç.

Ачаран уйрăлса пĕтмен, чăн-чăн арçын пулса çитеймен каччă, 48 килограмм таяканскер, 1943 çулхи ноябрĕн 9-мĕшĕнче салтак ретне тăтăм.

Л. КОЖЕЛЕЕВ,
ĕçпе вăрçă ветеранĕ.